Лидия САРИНЕ

# ШУР ПĔРКЕНЧĔК АЙĔНЧЕ

калав

Çав каç Юра килне кая юлса килчĕ. Дашăна ăсатма кайнăччĕ вăл. Ывăлĕ сăнран улшăннине, темле питĕ шухăшлă та кăмăлсăррине амăшĕ тӳрех асăрхарĕ. Кухньăна кĕмерĕ вăл, халичченхи пек хаваслăн калаçмарĕ. Пушмакне хыврĕ те тӳрех хăйĕн пӳлĕмне кĕрсе питĕрĕнсе ларчĕ.

Кăштахран эпĕ те киле кайма пуçтарăнтăм. Юлташăм ӳкĕтленине пăхмарăм, тепĕр чух тĕл пулма шантартăм. Ывăлĕ сăмах чĕнменнине кура унăн та кăмăлĕ пусăрăнчĕ пулас. Ун пек чухне паллах...

Елизавета Ивановна лăпкăн çывăраймарĕ, çине тăрсах ывăлĕпе калаçса пăхма шутларĕ. Тӳрех пӳлĕм алăкне уçмарĕ Юра. Амăшне курсанах тепĕр хут вырăн çине кĕрсе выртрĕ, пуçне минтерпе хупларĕ.

– Дашăпа хирĕçмерĕр пуль? – ыйтрĕ амăшĕ йывăç кравать хĕрне ларнă май. – Мĕн пулнă сана, Юра?

– Нимĕн те, – терĕ Юра кĕскен.

– Атя, тăр. Эсĕ юратнă апата пĕçертĕм. – Çĕр улми ăшне тултарнă аш питĕ тутлă пулчĕ. Соус нумай ятăм хальхинче.

– Анне, Даша качча тухать, – пĕлтерчĕ Юра, пуçне минтер çинчен çĕклемесĕр.

– Мĕскер? – кăнн пăхрĕ ывăлĕ çине Елизавета Ивановна.

Çитĕнсе çитнĕ йĕкĕт макăрни амăшĕн чĕрине çурсах ячĕ пулас. Çирĕп чунлă-çке вăл, ашшĕ пекех. Нихăçан та пули-пулми куççуль кăлармасть. Даша?! Мĕн ачаран пĕрле çитĕннĕ, чи килĕштерекен хĕрсенчен пĕри ... Ача садне те пĕрле çӳренĕ вĕсем, шкулта та пĕрле вĕреннĕ, пĕр вăхăтрах аслă пĕлӳ илчĕç. Çак çинçешке те илемлĕ хĕрпе каччă пĕр-пĕринсĕр пĕр кун та пурăнаймастчĕç мар-и? Кунта тем пулса иртет. Анчах мĕскер? Хальлĕхе амăшĕн пуçне те вырнаçмасть ку япала. Ĕненесси те килмерĕ.

– Вĕсен кĕçех туй пулать.

– Кама каять вара?

– Бизнесмена.

– Пулма пултараймасть, – терĕ Елизавета Ивановна, хăрах аллине чĕри тĕлне тытса. – Эсĕ шӳтлетĕн пуль, пустуй ĕнтĕ...

– Шӳтлеместĕп. Шӳтлеме мар, пурăнас та килмест, - пуçне айккинелле пăрчĕ Юра.

– Ан калаç! Ха, тупнă... Тепĕр тесен... Сан валли хĕр çук-и? Ав кашни каç шăнкăравласа тăнран кăлараççĕ.

– Вĕсем кирлĕ мар мана, анне. Даша кирлĕ.

– Даша! Даша! Юрататăп тетчĕ мар-и? Халь ăçта кайса кĕнĕ унăн юратăвĕ, э?

– Мĕн вăл юрату хальхи хĕрсемшĕн, анне?! – пуç айĕнчи минтерне çĕре çавăрса çапрĕ Юра, унтан тăрса ларчĕ, пуçне икĕ аллипе тытрĕ, урайнелле пăхрĕ. – Юрату! Юрату! Сирĕн вăхăтра пулнă, халĕ çук вăл. Юратман – улталанă. Эпĕ ухмаххи, ĕненнĕ.

– Тĕрĕс мар! – сиксе тăчĕ амăшĕ, хăй сисмесĕрех çемçе кавир тăрăх каллĕ-маллĕ утрĕ. – Юрату пур. Эс манпа ан тавлаш. Юрататъ вăл сана, эп пĕлетĕп. Чĕрем туять. Кунта ахаль мар-ха... Ашшĕ-амăшне итлет ĕнтĕ, пуян çынна парасшăн вĕсем. Юратнă. Юрататъ те... Мĕн, эпĕ Дашăна пĕлместĕп-им?

– Анне-е-е, итле-ха эс, – аллисене тăсрĕ йĕкĕт, мĕн, ну мĕн пама пултаратăп эпĕ ăна?! Мĕн пур манăн, э? Укçа-и? Хваттер-и? Халĕ Дашăн пурте пулать: хваттер, коттедж, иномарка... Ют çĕр-шывсене çӳрĕ!

– Эпир аçупа пĕрлешнĕ чух пирĕн нимĕн те пулман, – аллисемпе сулкалашрĕ Елизавета Ивановна. – Эпир унпа иксĕмĕр те стройкăра ĕçлеттĕмĕр. Çав пушмакпах ĕçленĕ, çав пушмаках хура кремпа тасатнă та хулана кайнă. Пире никам, пĕр çын та, пĕр пус та паман. Пĕлетĕн-и çавна?

– Ох, пуçларĕ ĕнтĕ... Эс мĕн хăвăр вăхăтрипе танлаштаратăн?

– Пĕр-пĕрне юратсан пурте пулать майĕпен.

– Супрĕ хăйĕн юратăвĕпе, – çамки пĕрĕнчĕ ывăлĕн, унтан тарăннăн сывласа илчĕ.

– Анне, кала-ха мана, вăт кала, – куçран пăхрĕ Юра амăшне.

Ах, мĕн чухлĕ хуйхă, мĕн чухлĕ ырату унта, ывăлĕн хăмăр куçĕнче! Тем парĕччĕ амăшĕ, кирлех пулсан хăйĕн пĕртен-пĕр чĕрине те... Мĕн тери телейсĕр вăл халь. Шанчăкне çухатнă, вĕççĕр тунсăх унăн куçĕсенче. Пĕлет-ха пурăнса курнă хĕрарăм, ку вăхăтлăх япала. Иртет. Хăçан та пулсан пурте иртсе каять. Анчах халĕ ... ытла та хытă сурать-çке унăн суранĕ.

– Хăвах шутла, анне, урайнелле пăхса хăй шухăшне ма-

лалла тăсрĕ çамрăк çын. – Эпĕ Дашăна юрататăп, анчах мана тухсан вăл çука юлать. Ăна "крутойййисем" илĕртеççĕ халĕ.

– Мĕншĕн? Ĕçлесен пурте пулать, – терĕ Елизавета Ивановна çирĕппĕн. – Ĕçлĕр. Ан ӳркенĕр.

– Вăл аслă пĕлӳ илнĕ пулсан та, пĕлетĕн-и, мĕн чухлĕ укçа илет? Унпа пурăнма пулать тетĕн-и?

– Эсир çамрăк. Икĕ-виçĕ çĕрте те ĕçлеме пултаратăр, – татса хучĕ амăшĕ.

– Çу-ук, анне. Даша ун пек ĕçлеме хăнăхман. Мĕншĕн асапланмалла унăн? Вăл лайăх пурнăçа тивĕç. Вăл манăн чăн-чăн аристократка.

– Санăн-и вара вăл? – перс ячĕ хĕрсе кайнă хĕрарăм.

Ку сăмахсене илтсен Юрăн пичĕ çатăрр! пĕçерсе кайрĕ. Çак самантра ăна питрен вĕри шывпа сапрĕ тейĕн – калаçу вĕçленчĕ. Тек шарламарĕ амăшĕ. Ăнланчĕ ахăртнех, Юрăна халĕ никам та пулăшаймĕ. Чи паха эмел – вăхăт. Вăхăт çеç сыватма пултарĕ ăна. Мĕнле те пулин тӳссе ирттертĕрччĕ çеç ывăлĕ. Ĕçке ерсе ан кайтăр. Темле пулсан та шăпа хăйĕннех тăвать.

Çĕрĕпех куç хупмарĕ çав каç амăшĕ. Ывăлĕ те хăй пӳлĕмĕнче пĕчченех асапланчĕ.

Даша килте пĕр хĕр. Паллах, ăна телейлĕ курас килет ашшĕ-амăшĕн. Мĕн тăвас тетĕн-ха? Пурте лайăххи енне, пурри патне ăнтăлать ку пурнăçра. Никамăн та начар пурăнас килмест. Укçа, мул уйăрать çамрăксене. Чăн та, ун урлă сиксе касма кашниех пултараймасть пулас. Уйрăлми çӳретчĕç вĕсем. Даша Юрăсем патĕнчен тухма та пĕлместчĕ. Тахăш вăхăтра ӳссе çитĕнчĕç. Ĕнтĕ качча каймалли, авланмалли вăхăт çитсе те тăчĕ. Яланхи пекех хĕр упраç качча тухмаваскать. Хăнăхса çитнĕччĕ вĕсем, ялан пĕрлеччĕ. Апатне те пĕрлех çиетчĕç. Даша тӳрех Юрăн пӳлĕмне кĕрет. Ак пĕррехинче вăл çывăрать, Даша ăна хăлхинчен кăтăклать, çӳçĕнчен ачашлать.

– Хырăм выçрĕ, – тет Юра, хăй вырăн çинчех йăваланса выртать-ха. Даша пĕчĕк сумкинчен тем кăларать, тумбочка çине хурать. Ку йăлтах ун валли.

– Мĕн çиес килет? – ыйтать хĕр. – Юрочка, мĕн?

– Пĕлĕм пĕçерсем.

Даша килти пекех, холодильникран пĕлĕм кăларать. Унтан пĕрлех апатланаççĕ.

Пĕррехинче ашшĕпе амăшĕ хăнана пуçтарăнаççĕ. Амăшĕ духипе сапăнать. Кула-кулах хăй умне пырса тăнă ывăлне те сирпĕтет, лешĕ аллисемпе хăлаçланать.

– Мĕн туса хутăн, анне?– Кĕçех Даша килет, эп мĕн калăп ăна? Ахаль те кĕвĕçет... Куншăн касармастех ĕнтĕ.

– Кĕвĕçет – апла юратать, – шӳтлет ашшĕ. – Тупнă кулянмалли. Эх, çамрăксем темерĕн. Хам та çаплаччĕ çав. Атя, эсĕ ар çын. Хĕр пĕрчине лăплантарасси вăл...

* * *

Авăн уйăхĕ. Лăпкă та хĕвеллĕ, янкăр кун. Оперăпа балет театрĕ умĕнчи тип-тикĕс лапамра хаклă йышши, тĕрлĕ маркăллă йăлтăркка машинăсем черетпех вĕçе-вĕçĕн чарăнса тăнă. Малтинче – çĕнĕ мăшăр. Вĕсене пурте ăшă куçпа пăхса ăсатаççĕ. Акă пĕр харăссăн кăшкăрса ячĕç, самантлăха чарăнчĕç. Трасса тăрăх васкаса килекен транспорта ирттерсе яраççĕ. Атăл хĕрне аннă пулнă та халĕ хула тăрăх ярăнма каяççĕ ахăртнех. Ĕмĕр асра юлмалли, кашни çын пурнăçĕнчи чи пăлхануллă самант ĕнтĕ ку. Турăçăм, мĕн тери илемлĕ мăшăр, мĕн пек хӳхĕм! Шурă пĕркенчĕк айĕнче ларакан Дашăна курсан эпĕ сывлама та чарăнтăм. Шур перчеткеллĕ хĕрĕн аллинче – пирус. Вăл ăна çине-çинех çăварĕ патне илсе пырать. Мĕн тесе туртать-ши? Çав териех хытă хумханать-ши? Çын чун-чĕрине никам та кĕрсе кураймасть паллах. Унта эпир пĕлменни, ăша пĕçертекенни темĕн чухлех пуль. Шурă пĕркенчĕк айĕнче пирус туртакан хĕре кĕтмен çĕртен курсан манăн ăшра темĕн таталса кайрĕ. Телей суннипе пĕрлех ăна манăн питĕ шеллес килчĕ. Кунĕ хĕвеллĕччĕ. Хĕвеллĕччĕ... Тин пĕрлешнĕ мăшăр айккинчен пăхма питĕ хитреччĕ...



**Лидия Михайловна Сарине – паянхи чăваш литературинче ăнăçлă ĕçлекен паллă çыравçă. Шӳтлĕ хайлав-и е сăвă – йăлтах чун витĕр кăларать вăл. Çавăнпах унăн произведенийĕсене аслисем те, ачасем те юратса вулаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Чăваш наци библиотеки çулсерен ирттерекен конкурсра Лидия Сарине кĕнекисем малти вырăнсене тухаççĕ: 2002 çулта – "Чĕрĕп инке", виçĕм çул "Настукпа Мухтар" чи лайăх вуланакан кĕнекесен шутне кĕнĕ.**

**Лидия Михайловна тăтăшах халăх хушшине тухса çӳрет, шкулта иртет-и унăн тĕл пулăвĕ е библиотекăра-и – яланах çын кăмăлне пĕлсе калаçать çыравçă. Ултă кĕнеке авторне Раççей писательсен союзĕ Хисеп грамоти парса чысланă. "Шур пĕркенчĕк айĕнче" калав – иртнĕ уйăхра çырнăскер – пирĕн вулакансене килĕшетех пуль тетпĕр.**